ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ АДМИНИСТРАТИВЛĂ ПРАВĂНА ПĂСНИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2025 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче административлă правăна пăснисем çинчен" 2003 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 22 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2003, 55 №; 2005, 62, 64, 65 №-сем; 2006, 69, 72 №-сем; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 75, 77, 78 №-сем; 2009, 81, 82 №-сем; 2010, 84, 86 №-сем; 2011, 88–91 №-сем; 2012, 92 (I том), 94, 96 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; 2014, 3, 6, 9, 11, 12 №-сем; 2015, 6, 10 №-сем; 2016, 3, 4, 10, 11 №-сем; 2017, 2–4, 7, 11 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 4-мĕшĕ, пуш уйăхĕн 25-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, утă уйă-хĕн 1-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000761 №; "Республика" хаçат, 2023, ака уйăхĕн 26-мĕ-

шĕ, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2024, ака уйăхĕн 10-мĕшĕ, çу уйăхĕн 3-мĕшĕ; 2025, нарăс уйăхĕн 26-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) III сыпăкра:

а) 26^2 статьяра:

6-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"6. Пурте усă куракан вырăнсенче тата территорисенче йытăсене, çăварлăх кирлĕ мар виçĕ уйăха çитмен йытă çурисемсĕр пуçне, çăварлăхсăр çӳретнĕшĕн –";

асăрхаттарнине çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Çак статьян 6-мĕш пайĕн положенийĕсен вăйĕ йытăсене, хăрушă пулма пултаракан йытăсемсĕр пуçне, вырăнти хăй тытăмлăх органĕн йышăнăвĕпе килти чĕр чунсене уçăлтарса çӳреме ирĕк панă вырăнсенче çӳретнине пырса тивмест.";

ă) çакăн пек çырса 26^3 статья хушса хурас:

"**Статья 26^3. Хуçасăр чĕр чунсене пăхса усрас енĕпе Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсен требованийĕсене пăсни**

1. Хуçасăр чĕр чунсене вăхăтлăх тытмалли пунктсен хуçисем Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийĕнче хуçасăр чĕр чунсене пăхса усрасси çинчен" 2024 çулхи чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 76 №-лĕ саккунĕн 6 статйипе пăхса хăварнă мероприятисене пурнăçламаншăн, çак статьян 2-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне, çавăн пекех çавнашкал мероприятисене Чăваш Республикин асăннă саккунĕпе палăртнă сроксене пăсса пурнăçланăшăн –

асăрхаттараççĕ е должноçри çынсене – икĕ пин тенкĕрен пуçласа пилĕк пин тенкĕ таран; юридически сăпатсене пилĕк пин тенкĕрен пуçласа вун пилĕк пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

2. Хуçасăр чĕр чунсене вăхăтлăх тытакан пунктсенчен хуçасăр чĕр чунсене Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийĕнче хуçасăр чĕр чунсене пăхса усрасси çинчен" 2024 çулхи чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 76 №-лĕ саккунĕн 6 статйин 9-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă мероприятисене пурнăçламасăр çавнашкал чĕр чунсене çĕнĕ хуçасене е чĕр чунсем валли тунă приютсене парса е тата тивĕçлĕ чĕр чунсене малтан пурăннă вырăна тавăрса кăларса янăшăн, çавăн пекех малтан пурăннă вырăна тавăрма юраман

хуçасăр чĕр чунсене вăхăтлăх тытакан пунктсенчен малтан пурăннă вырăна тавăрса кăларса янăшăн –

асăрхаттараççĕ е должноçри çынсене – икĕ пин тенкĕрен пуçласа пилĕк пин тенкĕ таран; юридически сăпатсене пилĕк пин тенкĕрен пуçласа вун пилĕк пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

3. Хуçасăр чĕр чунсене вăхăтлăх тытакан пунктсене обществăлла, административлă çуртсенче е производство çурчĕсенче, пурăнмалли çуртсенче (çав шутра нумай хваттерлĕ çуртсенче), çавăн пекех çурт-йĕр лартакан тăрăх территорийĕнче вырнаçтарнăшăн тата (е) хуçасăр чĕр чунсене вăхăтлăх тытакан пункт территорийĕн пĕтĕм периметрĕ тăршшĕпех хуçасăр чĕр чунсене хуçасăр чĕр чунсене вăхăтлăх тытакан пункт территорийĕнчен хăйсем тĕллĕн тухса кайма май паман икĕ метр çӳллĕш тăтăш хӳме е сеткăллă хӳме тытманшăн –

асăрхаттараççĕ е должноçри çынсене – икĕ пин тенкĕрен пуçласа пилĕк пин тенкĕ таран; юридически сăпатсене пилĕк пин тенкĕрен пуçласа вун пилĕк пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

4. Çак статьян 1–3-мĕш пайĕсемпе пăхса хăварнă административлă правăна тепĕр хут пăснăшăн –

должноçри çынсене – пилĕк пин тенкĕрен пуçласа вунă пин тенкĕ таран; юридически сăпатсене вун пилĕк пин тенкĕрен пуçласа вăтăр пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

Асăрхаттарни. Çак статьян тĕллевĕсем валли хуçасăр чĕр чунсене вăхăтлăх тытакан пунктсен хуçисем тенине Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийĕнче хуçасăр чĕр чунсене пăхса усрасси çинчен" 2024 çулхи чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 76 №-лĕ саккунĕпе çавнашкаллисем тесе палăртнă çынсем пек ăнланмалла.

Çак статьяра хуçасăр чĕр чунсем тенине хуçисем çук е хуçисем кам пулни паллă мар чĕр чунсем пек ăнланмалла.";

2) VI сыпăкăн 33 статйин 2-мĕш пайĕн "с" пунктне çакăн пек çырса хурас:

"с) хуçасăр чĕр чунсене пăхса усрас енĕпе регионти патшалăхăн тĕрĕслевне (надзорне) туса пыма полномочи илнĕ Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн сектор заведующийĕ, консультанчĕ, тĕп специалист-экспертчĕ – çак Саккунăн 26^2, 26^3 статйисемпе пăхса хăварнă административлă правăна пăснисем çинчен.";

3) VII сыпăкăн 34 статйин 16-мĕш пайне çакăн пек çырса хурас:

"16. Чăваш Республикин Патшалăх ветеринари службин ертӳçи тата унăн çумĕсем административлă правăна пăснисем çинчен çак Саккунăн 26^2, 26^3 статйисемпе пăхса хăварнă ĕçсене пăхса тухаççĕ.".

2 статья

1. Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

2. Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче административлă правăна пăснисем çинчен" 2003 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 22 №-лĕ саккунĕн 26^3 статйин положенийĕсем 2031 çулхи нарăс уйăхĕн 28-мĕшĕччен (нарăс уйăхĕн 28-мĕшне кĕртсе) вăйра тăраççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи ака уйăхĕн 29-мĕшĕ
23 №